Суд материалĕсем тăрăх

Çарта пулни те стажа кĕрет

Вĕрентӳре тата сывлăха сыхлас ĕçре вăй хуракансем чылайăшĕ суда хăйсене ватлăха пула вăхăт çитмесĕрех пенсие тухассин ыйтăвĕсемпе пыраççĕ. Нумай чухне çакă пенсипе тивĕçтерекен органсем ватлăха пула ĕç пенсийĕпе вăхăт çитмесĕрех тивĕçтерессин ыйтăвне татса паманнипе çыхăннă.

Сăмахран В. тухтăрăнне, вăл çынсен сывлăхне сыхлассипе патшалăх тата муниципаллă сывлăх учрежденийĕсенче вăй хунă пулин те, Пенси фончĕн районти управленийĕ 1983–1985 çулсенче СССР Çар ретĕнче пулнин тапхăрне ĕç стажне кĕртме килĕшмен. Çавăн пекех Пенси фончĕн районти управленийĕ К. педагог тĕлĕшпе те çакăн пек йышăну кăларнă пулнă. Вăл вара 1982–1984 çулсенче службăра тăнă.

Çак ĕçсене судра пăхса тухма тиврĕ. Суд ларăвĕсенче Пенси фончĕн представителĕ иск требованийĕсене йышăнманнине пĕлтерчĕ, асăннă гражданссене ватлăх енĕпе вăхăт çитмесĕрех ĕç пенсийĕ парас маррипе тĕрĕсех йышăну тунă терĕ.

Кунта çакна асăнса хăвармалла. Раççей Федерацийĕн Конституци сучĕн 2004 çулхи январĕн 29-мĕшĕнчи 2-П № йышăнăвĕ пур. Унта 2001 çулхи майăн 24-мĕшĕнчи 8-П № йышăну пирки те асăнни пур. Унта палăртнă тăрăх, Раççей Федерацийĕн законодательствисемпе килĕшӳллĕн çын пенси илмелли правăна право йĕркелĕвĕн çĕнĕ хутшăнăвĕсем вăя кĕриччен илнĕ пулсан, унченхи правăсемех сыхланса юлаççĕ.

Тавлашуллă асăннă тапхăрсенче СССР Министрсен Канашĕ 1959 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 1397 № йышăну вăйра пулнă. Унта сывлăха сыхлас ĕç тата сиплев учрежденийĕсенче вăй хуракансене ĕç выслугине кура пенси парасси пирки калана. Унта асăннă ужрежденисенче тата организацисенче ĕçленипе пĕрлех Совет Çарĕн ретĕнче пулнă çулсене те пенси стажне кĕртмелли пирки калани пур.

В. тата К. гражданссем Совет Çарĕн ретĕнче 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пулнă. Унччен вăхăт çитмесĕрех ĕç пенсийĕсем шутласа парассипе çĕнĕ право хутшăнăвĕсем пурнăçа кĕмен. Çапла вара асăннă гражданссем Совет Çарĕн ретĕнче пулнă вăхăтсене ĕç пенсине вăхăт çитмесĕрех шутласа пама специальноçпе ĕçленин шутне кĕртсе пама тиврĕ.

Пенси законодательствине урăхларах ăнлантарса пани тата унпа тĕрĕс мар усă курни çынсене социаллă çăмăллăхсемпе тивĕçтерессипе вĕсен Конституциллĕ прависене пăсни пулĕччĕ. Çавна каласа хăварасшăн. Судăн асăннă йышăнăвĕсем вăя кĕнĕ ĕнтĕ, В. тухтăр тата К. педагог хăйсене тивĕçлĕ пенсисене йĕркеллĕ илсе тăраççĕ.

Т. ВОЛКОВА,
Муркаш район сучĕн судйин пулăшаканĕ.

Ачалăх

Тивĕçлипе паллă турăмăр

Районти пĕрремĕш номерлĕ тĕп больницăра Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа анлă уяв ирттертĕмĕр. Çак кун ячĕпе ачасене районти тĕп больницăн тĕп врачĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов саламларĕ.

Уяв илĕртӳллĕн пуçланчĕ. Малтанах ачасем «Тĕнче ачасен куçĕпе» ятпа асфальт çинче ӳкерчĕксем турĕç. Вĕсен тавра курăмĕпе фантазийĕ питех те пысăк иккен. Кунпа пĕрлех ачасене юратнă юрăсене юрлама, çу кунĕсемпе ачалăх пирки сăвăсем вулама та питĕ килĕшрĕ.

Ачасем ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле чечек кăшăлĕсем çыхрĕç. Жюри вара çак ĕçе мĕн вăхăтра туса ирттернине хак пачĕ. Уявра ачасем ватман çинче пур ачасем валли çырнă сĕнӳсемпе хăйсен алă йĕрĕсене хăварчĕç.

Тĕрлĕрен викторинăсем, ӳкерчĕксен, чечексен композицийĕсен конкурсĕсем, спорт мероприятийĕсем те сахал мар пулчĕç. Активлă участниксем вара дипломсене, грамотăсемпе парнесене тивĕçрĕç.

Ачасен уявĕ лимонад-брейкпа тата супăнь хăмписен салючĕпе вĕçленчĕ. Унта хутшăннисем – аслисемпе ачасем – çак мероприятипе кăмăллă юлчĕç, пĕтĕм çу кунĕсем валли вăй-хал илчĕç.

Г. КУЗНЕЦОВА,
профком председателĕ.

Культура хыпарĕсем

«Библиотекăна кĕнеке парнеле»

Ырă ĕç туни, пĕр-пĕрне савăнăç парнелени – пархатарлă япала. Ун пек çын кăмăл-сипет енĕпе те пуян.

Библиотека ĕçченĕсем пирки калас пулсан, вĕсем хăйсем патне пыракансене кăмăллăн кĕтсе илсе кирлĕ информацип май пур таран пулăшма тăрăшаççĕ. Кунта çамрăксем те, ватти-вĕтти те çӳрени уйрăмах кăмăллă.

Библиотека паян кун та çĕнĕ йышши техника хатĕрĕсемпе, тĕрлĕ литературăпа пуянлансах пырать. Вырăнта пурăнакансем «Библиотекăна кĕнеке парнеле» акцие те активлă хутшăнчĕç. «ВИВАТ» общество ертӳçи В.И. Иванов, детектива кăмăлланăран, детективпа çыхăннă романсене 78 кĕнеке парнелерĕ. Çавăн пекех кĕнекесемпе туслă С.А. Ершова пенсионерка библиотекăна чăваш писателĕсен кĕнекисемпе пуянлатрĕ.

2-мĕш класра вĕренекен Павел Федоров библиотекăна «Животный мир России» кĕнекепе пуянлатрĕ, ытти ачасем те ăна вуласа пĕлччĕр терĕ. Ку кĕнеке вара ӳкерчĕксемпе те пуян. Кĕнеке юратакан ача чăннипех ăслă, чĕрипе ырă пуласса шанас килет пирĕн, аслисен. Чĕререн пысăк тав сăмахĕ вĕсене.

Шкул ачисем те хастар пулчĕç. Хăйсем кĕнекесемпе туслă пулнине тивĕçлипе кăтартса пачĕç.

В. КОНУЗИНА,
Çатракассинчи ял библиотекин ертӳçи.

Шкул ачисен пултарулăхĕ

Муркаша савса

Эпир – Муркаш ачисем,
Çут малашлăх хуçисем,
Куллен çӳретпĕр шкула,
Вĕренетпĕр тăрăшса.

Пит хаваслă çӳреме,
Тăван шкулта вĕренме,
Районта ăс-тăн пухма,
Тăван енрех пурăнма.

Ксения ВОЛКОВА,
Москакасси шкулĕнче 5-мĕш класра вĕренекен.

Тавралăх тирпей-илемĕшĕн

Шкул ачисем пулăшрĕç

Çурхи кунсем çитнĕ май вырăнсенче тавралăха тирпей-илем кĕртессипе субботниксем йĕркелесси ырă йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ку ĕçе Каршлăхри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен интернат çуртĕнче те манăça кăларма шутламаççĕ. Çак кунсенче кунта Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекенсем тăрăшрĕç, территорие тасатса тирпейлессипе тимлерĕç. Ку ĕçсене Светлана Андреевна Леонтьева, Альбина Ивановна Бархаткина, Екатерина Ивановна Гунина педагогсем йĕркелесе ертсе пычĕç. Интернат çуртĕнче пурăнакансем тавралăха тирпей-илем кĕртме пулăшнăшăн шкул ачисене пысăк тав сăмахĕ калаççĕ.

В. КРЮЧКОВА, культорг.

Район пурнăçĕнчен

Ял уявĕ иртрĕ

Малтанхи канмалли кунсенче ял уявне Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятман ялĕнче пурăнакансем те уявларĕç. Питĕ интереслĕ те савăнăçлă иртрĕ вăл. Уяв никĕсĕнче – Ятман ялĕнчи клуб 50 çул тултарни.

Ял уявне Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Кожевников уçрĕ, хăнасемпе паллаштарчĕ, ял тăрăхĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинче чарăнса тăчĕ. Ятмансене паллă уявпа саламлама район пуçлăхĕн çумĕ тата культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А. Андреева, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ П. Давыдов килсе çитнĕ. Вĕсен саламлă сăмахĕсене çирĕплетсе Чăваш эстрадин çăлтăрĕсем, Çатракассинчи вăтам шкулăн çамрăк артисчĕсем, Кашмашри Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ ял уявне савăк сăн кĕртрĕç.

Çакнашкал уяв спонсорсен пулăшăвĕсĕр пулмасть. Çавăнпа та ял уявне çӳллĕ шайра ирттерме пулăшнăшăн ял çыннисем хăйсен ентешĕсене А. Н. Иванова, С. П. Матвеева, А. К. Иванова, А. М. Максимова чунтан тав турĕç.

А. БЕЛОВ.

Тăван ене тĕпчетпĕр

Çу кунĕсем никама та килте лартмаççĕ. Эпир те, Шурча шкулĕн вĕренекенĕсем, каникул кунĕсене усăсăр ирттерес мар тесе тăван ен историне тĕпчеме тăрăшатпăр. Çак тĕллевпе эпир июнĕн 1-мĕшĕнчен «Кустăрма» лагерь йĕркелерĕмĕр. Пирĕн шутпа тăван ене тĕпчекен лагерьсем питĕ кирлĕ. Вĕсем атте-анне чĕлхине, тăван халăх историне, ӳсен-тăрансемпе чĕрчунсен тĕнчине тĕпчесе пĕлме пулăшаççĕ. Тăван ене юратни ачасене хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем çине те çирĕпрех пăхма ыйтать. Уйрăмах пушар хăрушсăрлăхĕ çине. Çуллахи шăрăх кунсенче вут-кăвар кӳме пултаракан инкек пирĕнтен кашнинех шухăшлаттарать. Çак пархатарлă çул çинче пире Н. Борзаевапа Н. Тюрина вĕрентекенсем пулăшаççĕ, ертсе пыраççĕ.

Шкул ачисен çуллахи каникулĕ усăсăр ан ирттĕр тесе шкул администрацийĕ çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен профильлĕ тата сывату лагерĕсем ĕçлеттерме пуçларĕ. Пĕрремĕшне паян 15 вĕренекен, иккĕмĕшне 20 ача çӳрет. Лагерьсен ертӳçи Вера Витальевна Бычкова кун йĕркине интереслĕ тăвассишĕн тăрăшать.

А. ЕРДУКОВА, лагерь командирĕ.

Лагерь ĕçлеме тытăнчĕ

Çу кунĕсене кашниех усăллă та интереслĕ ирттерме тăрăшать. Хăшĕ килтех пулать, теприсем канма та каяççĕ. Эпĕ каникул вăхăтĕнче лагере килме шутларăм. Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта «Капитошка» лагерь уçăлчĕ. Ку лагере тĕрлĕ çулсенче çуралнă ачасем пуçтарăнтăмăр. Пире чи малтанах юмахсенчи геройсем кĕтсе илчĕç. Эпир юмах тĕнчине лекрĕмĕр.

Лагерĕн королеви – Елена Вениаминовна Максимова. Унти асамçăсем – Зинаида Андреевна Антонова тата Ангелина Иосифовна Белова. Вĕсем лагерьти пурнăç интереслĕ ирттĕр тесе нумай тăрăшаççĕ. Кашни кунах тĕрлĕрен мероприятисем, спорт вăйăисем сахал мар иртеççĕ.

Пĕрремĕш куннех пире лагерьти пурнăçпа, кунти кун йĕркипе паллаштарчĕç. Ачасем кашни кунах лагере хавас кăмăлпа килеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене интересли кĕтсех тăрать.

Эпир ĕçлеме те ӳркенместпĕр. Çум çумламалла-и е пахча çимĕç шăвармалла – пурте хаваспах хутшăнаççĕ. Çакăн пек лагерьте эпĕ çу каçипех пурăнма хатĕр.

Елена АЛЕКСАНДРОВА,
Сосновка шкулĕнче 3-мĕш класра вĕренекен.

Çулталăка пĕтĕмлетрĕç

Иртнĕ эрне кун, çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем хушшинче конкурс ирттернĕ май район администрацийĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче пурнăçланă иртнĕ çулхи ĕçсене те тишкерсе хак пачĕ. Çакна валли конкурса пынă специалистсемпе ферма ĕçченĕсем Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕн залне пуçтарăнчĕç. Малтанах пухăннисене иртнĕ çулхи ĕç-хĕлпе паллаштарса район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев тишкерӳллĕ доклад туса пачĕ. Çитменлĕхсене палăртса малашлăхри тĕллевсем пирки тухса калакансем те сахал мар пулчĕç.

Çак канашлура район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ĕçре палăрнă ĕç коллективĕсене дипломсемпе тата укçан премисемпе чысларĕ. Хăйсен ĕçĕнче уйрăмах палăрнисене «Чи лайăххи» ят хăйăвĕсем çакса ячĕç. Ку канашлу пирки хаçатăн çитес номерĕсенче тĕплĕнрех каласа парăпăр.

А. ПЕТРОВ.

Çыру хурав кĕтет

Плотинăна юсама вăхăт

Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕнчен Н.И. Никитинран Муркаш ялĕнче пурăнакансен ячĕпе çавăн пирки ыйтса пĕлес килет. Муркашри Чапаев тата Колхозная урамсене пĕве сыпăнтарса тăрать. Ку пĕве вара хальхи вăхăтра юхăнса выртать. Çумăр пулсан е çурхи шыв-шур пĕтĕмпех Чапаев тата Колхозная урамсенчен çак пĕве пуçне юхса анать. Пĕве пуçне юсама вăхăт ĕнтĕ.

Кунпа пĕрлех пĕве пуçĕпе газ пăрăхĕ каçса каять. Ку вара хăрушлăхпа çыхăннă. Пĕве пуçне ишĕлессинчен хӳтĕлесси ял çыннисене питĕ шухăшлаттарать. Хальтерех кунта юсав ĕçĕсем туса ирттермесен, кайран сахал мар укçа-тенкĕ тăкаклама тивĕ. Мĕнле хурав парĕ-ши асăннă урамсенче пурăнакансен ыйтăвĕ çине Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ?

Ку тăрăхра пурăнакансем ыйтнипе

В. МАСТЕРОВ, Краснотурьинскри индустри колледжĕн экономика пайĕн заведующийĕ.

Свердловск облаçĕ.